
Егор Афанасьев
ЁШНЕРИ ЁЛКА
ЧĂВАШГОСИЗДАТ · 1954

Егор Афанасьев

# ЁШНЕРИ ЁЛКА

*Юмах*



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской А... Р

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1954

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВКИ
Чувашской Книжной Палате
6 ноября 1954 г.
№ 278



Иртрĕ-кайрĕ кивĕ çул.
Çитрĕ-тăчĕ çĕнĕ çул.

Ыран çĕн çул тенĕ каç
Çывăрмарĕ ик мулкач:
Çĕн çул çитрĕ—мĕн тăвас?
Епле пирĕн уявлас?

Пĕрле ларчĕç канаша,
Путрĕç тарăн шухăша.

Ик хăлхине вылятса,
Хĕсĕк куçне кăшт чарса,
Пĕри хушрĕ теприне:
— Чуптар пакша патне.



Мулкачсем пынӑ ҫӗре
Пакша ларнӑ ӗҫсӗрех.
Пӳртне ҫунӑ, тасатнӑ,
Килкартишне ҫаратнӑ.
Халь ла́рать иккен канса,
Кат та кат! мӑйӑр катса.

— Эй, вӗлт хӳре, эй, пакша,
Пӗрле кил-ха канаша.
Ҫӗн ҫул ҫитрӗ, мӗн тӑвас?
Епле пирӗн уявлас?—
Сӑмах хушрӗ ик мулкач.
Хӑйсем хуйхӑллӑн пӑхаҫ.
Пакша хӳре вылятать,
Сар мӑйӑрне кат! кататъ.
— Пӗлместӗп калама,
Пӗлместӗп ӑс пама.
Ытах ним каламанран
Ыйтам кукӑрсӑмсаран.
Инҫе мар, чӑрӑшлӑхра,
Йӑвӑ-йӑвӑ чӑтлӑхра.
Чӗнсен, нумай кӗттермест,
Ӑс парасран ӳркенмест.
Пакша:—Кӗтӗр кӑшт!—терӗ,
Хӳри кӑна вӗлтлетрӗ.

Илеймерĕç асăнса—
Çитрĕ хай кукăрсăмса.
— Çынсем ёлка тăваççĕ,
Çĕнĕ çула чысласçĕ.
Калăр, пирĕн мĕн тăвас?
Епле пирĕн уявлас!—
Сăмах хушрĕ ик мулкач,
Хăйсем хуйхăллăн пăхаç.

— Чăрăш тени таврара
Пирĕн çук-и-мĕн ара?
Ак ман кил çывăхĕнче
Иртме çуккă вĕсенчен.
Инçе мар кунта—ёшне.
Ёшнери пĕр чăрăшне
(Кирлĕ мар ăна пăсма)
Мĕншĕн ёлка тăвас мар?
Пур кайăка пухăпăр,
Çĕнĕ çула чыслăпăр.
Выльăпăр та кулăпăр,
Ташлăпăр та юрлăпăр.
— Систермесĕр кам пĕлĕ,
Пĕр чĕнмесĕр кам килĕ?
Хăш кайăкне хушăпăр,
Кампа хыпар ярăпăр?





Шăп та çакă самантра
Тем таккарĕ çывăхра.
Ку иккен—улатакка,
Ывăнма пĕлмест, таккать.

— Капăр çĕлĕк, сар туна,—
Чĕнсе илчĕç ак ăна.—
Кăшт сăмсуна шеллеччĕ,
Пирĕн йыша итлеччĕ.
Кĕçĕр çĕн çул ячĕпе
Ёлка тăвас терĕмĕр.
Пур кайăка ушкăнпе
Кунта пухас терĕмĕр.
Хыпар ярччĕ таврана,
Таврари пур вăрмана.

Улатакка ывăнмасть,
Сăмси хурçă—ыратмасть.
Турата такка-такка,
Сар туна—улатакка
Тĕрлĕрен сăмах тăвать,
Телеграммăсем ярать:
„Итлĕр! Итлĕр!
Телеграмма илĕр!
Пурте! Пурте!

Чупаканни те,
Вĕçекенни те.

Телеграмма илĕр,
Итлĕр, итлĕр!
Сăр вăрманĕ варринче,
Çĕмĕрле çывăхĕнче,
Пит илемлĕ ĕшнере
Елка тăвас терĕмĕр,
Пурне те пухас терĕмĕр.
Пур кайăка чĕнетпĕр,
Ыр хăна пек кĕтетпĕр.
Васкăр! Васкăр!
Вĕçекенсем—вĕçтерĕр,
Чупакансем—чуптарăр,
Утакансем—уттарăр.
Васкăр!..“

* * *

Хисеп тăван тупăнчĕ,
Сума сăван пухăнчĕ:
Мăшăршарăн ак килеç,
Кашни йăтнă кучченеç.
Чакак çитрĕ чаклатса,
Хăй мăшăрне çаклатса.
Ушкăнпа, чĕвĕлтетсе,
Çерçи çитрĕ вĕçтерсе.





Тăмана, лăпăстатса,
Кĕçĕ ик куçне чарса.
— Кăлтăр-р!—терĕ çывăхрах,
Ăсан тăнă алăкра,
Шурă ирĕм аллинче,
Кучченеç ирĕм çинче:
Шурă хурăн кăчкисем,
Тĕрлĕ йывăç пепкисем.

Шăхăрнă пек туйăнчĕ,
Пăчăр инке курăнчĕ.
Пăчăр кăмăллă иккен:
Ушкăна çитсе кĕрсен,
Хăналать, ыр пĕлĕш пек,
Кĕркуннехи пилешпе.

Кам ку, меллĕн пит утать!
Паçăрхи пакша пырать.
Пĕр карçинкка мăйăрне
Хăй йăттарнă мăшăрне.

Пĕсехине каçăртса,
Уйăп пычĕ васкаса.
Шăкăл-шăкăл калаçса,
Ларса тухрĕç вырнаçса.
Шăп вуниккĕ çитессе
Ывăнсах çитрĕç кĕтсе.

— Пуçлас,—терĕ тăмана,—
Ывăнтарчĕ ку мана.

Ула курак хирĕçлет:
— Кăшкăртман-ха Çĕмĕрле.
Çурçĕрпе вара, паллах,
Çĕмĕрле кăшкăртмаллах.

— Чим,—тет çерçи,—чимĕр,
Чи аслине чĕнĕр...
— Ка-арĕç,—тет ула курак,
Кура тăрăр, çитĕ ак.

— Тем, тем... Ку суя,—
Ĕненмерĕ кăсăя.

Упа тухнă шăтăкран,
Аран тăнă ыйхăран.
Халь-халь ёлка уçас чух,
Вăйă-юрă пуçлас чух
Упа çитрĕ тăчĕ,
Ырлăх-сывлăх сунчĕ.

Çĕмĕрле çĕмĕрттерсе,
Сĕм вăрмана чĕтретсе,
Мăннăн ячĕ кăшкăртса,
Шăп çурçĕрне палăртса.





— Ҫӗн ҫул ҫитнӗ ячӗпе
Ырлăхпа та телейпе!..
Кайăк-кӗшӗк ыткăнать,
Пӗр-пӗрне телей сунать.

—Чарăнсамăр,—тет чакак.
— Ларăр,—тет ула курак.
Тилли калать: лăпланăр,
Ёлка тавра вырнаҫăр.
Ҫӗкленет аран упа—
Вăл хăй пӗччен пӗр купа.
Икӗ тилӗ, ик мулкач
Ик енне пырса тăраҫ.
Пакша хăй мăшăрӗпе
Пӗрле тăчӗ тилӗпе.
Ҫунатлисем хăпарчӗҫ,
Чăрăш ҫине вырнаҫрӗҫ.

— Ҫаврăнар ёлка тавра,
Юрлар юрă пӗр ҫавра,—
Хăюлланнă ик мулкач
Кăшт вӗрентнӗ пек пулаҫ.

Ҫаврăнаҫҫӗ—чӗнмеҫҫӗ:
Юрламашкăн пӗлмеҫҫӗ.





Ак пуçлаççĕ кайăксем,
Юрлас теççĕ-мĕн вĕсем:
— Чак! Чак! — тет чакак.
— Крак! — тăвать ула курак.
Чаклатса илет чана,
Чаклатать те чарăнать.
Çинçен пăчăр шăхăрать,
Тăмана та çухăрать.

Кăвакарчăн кăрлатать,
Каллĕ-маллĕ уткалать.
Кăсăйи те пикенет,
Сасси çинçе — именет.
Пĕрре-иккĕ авăтсан,
Кăлтăр! çаврăнать ăсан.

Улатакка сиккелет:
— Так, так, — текелет,
Капла пирĕн ĕç тухмасть,
Капла савăнăç пулмасть.
Те çуках вара юрри,
Ним чĕнмест хăшĕ-пĕри.

— Ташлар, — терĕç, — пĕр кана,
Чĕнес, терĕç, упана.
Ташша тухрĕ утаман,
Ташша ячĕ утаман.



— Пилӗк ҫул эп пусайман,
Ултӑ ҫул эп утайман.
Халь утатӑп, утаман,
Халь ташлатӑп пит аван.

Ҫуначӗсемпе сулса,
Кайӑксем ларас кулса.
Упи тилле кӑларчӗ,
Ун вырӑнне хӑй ларчӗ.

— Ну, ҫитет утамана.
Ӑшӑ пулчӗ, тет, мана.
Хывма тӑрать кӗрӗкне,
Тек шырать хӑй тӳмине.
Анчах тӳми тупӑнмасть,
Хура кӗрӗк хывӑнмасть.

Ёшне ирччен шавларӗ,
Шавӗ инҫе янрарӗ.
Ташши пулчӗ ҫемӗсӗр,
Юрри пулчӗ кӗвӗсӗр.
Мӗншӗн тен?
Мӗншӗн тесен,
Чипер кайӑк-юрӑҫсем,
Ҫуллахи купӑсҫӑсем:
Чӗвӗл-чӗвӗл чӗкеҫсем,

Шăпчăксемпе шăнкăрчсем,
Шăкăлчисем, куккуксем,
Саркайăксем, тăрисем,
Хитре вĕлтрентăрисем—
Пурте кăнтăрта вĕсем.

Таврăнсассăн çуркунне,
Çитсе курăпăр уявне.
Çурхи уяв хаваслă,
Юрри-кулли—янравлă.



Егор Афанасьевич Афанасьев

# ЕЛКА НА ПОЛЯНЕ

Художник П. СИЗОВ

Редактор *В. Алендеев* Худ. редактор *М. Силкина*
Тех. редактор *А. Краснов* Корректор *И. Остроумов*

НТ 01627. Сдано в набор 20-VIII-1954 г. Подписано к печати 5-X-1954 г.
Формат 70×92 1/16. Объем 1,17 п. л., уч. изд. л. 0,62.
Тираж 3 000 экз. Заказ № 1036. Цена 30 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.
Гор. Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 30 коп.

Е. АФАНАСЬЕВ

ЕЛКА НА ПОЛЯНЕ

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1954